# НИКИТА БИЧУРИН

Çуралнăранпа 210 çул çитнĕ май



Чăваш халăхĕн мухтавлă ывалĕ Никита Яковлевич Бичурин (1777—1853) тĕнче наукинче уйрăмах авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи Китая тĕпчесе палăрнă. Вăл Российăри Наукăсен академийĕн член-корреспонденте, Парижри Ази обществин членне суйланма тивĕçнĕ. Ăна хăй çырнă пысăк пĕлтерĕшлĕ кĕнекисемшĕн тăватă хутчен Российăри Наукăсен академийĕн Демидов ячĕпе хисеплененекен премине панă. Унăн ĕçĕсем хăй вăхăтĕнчех урăх çĕршывсен чĕлхипе пичетленсе тухма ĕлкĕрнĕ.

Никита Бичуринăн пурнăçĕпе пултарулăхне халиччен сахал мар тишкерсе çырнă. Кунта уйрăмах унăн тавракурăмĕнчи социаллă пурнăçпа политика, эстетикăпа илемлĕ литература тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Паллă ĕнтĕ, кирек мĕнле шухăшлавçăн тĕнчекурăмне тишкернĕ чухне те атеизм ыйтăвĕсене шута илмесĕр тăма çук. Анчах, шел пулин те, чапа тухнă синологăн атеизм тата шухăш ирĕклĕхĕ çинчен каланисене паян куна çитсе те ятарласа пĕтĕмлетмен. Тĕрлĕрен тĕпчевçĕ ĕçĕнче ку енĕпе кĕскен каласа иртни тĕл пулать-ха, паллах, анчах питĕ çителĕксĕр çакă. Çавăнпа та пирĕн тĕллевĕмĕр шăпах — Бичурин пурнăçĕпе пултарулăхĕнче атеизмла шухăш ирĕклĕхĕ палăрнине пĕтĕмлетесси. Вырăс наукинче манăçми йĕр хăварнă тĕпчевçĕ еткерне тишкересси — чăвашсемшĕн уйрăмах чыслă ĕç. Вăл пире мухтавлă синологăн тавракурăмне, унăн кĕнекисене, вăл пурăннă тапхăра тĕплĕнрех пĕлме пулăшĕччĕ. Чăвашран тухнă чаплă çыннăн ĕç-хĕлне сума суса хаклани çамрăк ăрăва патриот пулса çитĕнтерес ĕçре те кирлĕ.

1954 çулта вырăс тĕпчевçи Д. И. Тихонов çапла асăрхаттарнăччĕ: «Бичурина илемлетсе е тĕссĕрлетсе кăтартма сăлтав çук: унăн ăслăлăхпа литература еткерне хăй вăхăтне, историн уйрăм тапхăрне шута илсе тишкермелле, унран историн мĕнпур ыйтăвне материалистла тĕрĕс ăнланнине ыйтма кирлĕ мар. Китайла çырнă питĕ нумай материала вăл пурне те вуласа пĕлме май туса панă, вырăс вулаканĕсене Китайпа паллаштарчĕ; хăйĕн статйисенче тата ĕçĕнче Хĕвелтухăçри çĕршывсемпе халăхсем çинчен çÿрекен йăнăш шухăшсене сирсе ячĕ, вырăс наукине хÿтĕленĕ май, Хĕвеланăç Европа ученăйĕсем умĕнче ытлашши пуç таяссине татăклăн хирĕç тăчĕ».

Саманапа уйрăм çын шăпин хăйевĕрлĕхĕсене шута илменнипе ĕнтĕ чылай тĕпчевçĕ Н. Я. Бичуринăн стихийăлла материализмла тата тĕне хирĕçле туртăмĕсене хăй вăхăтĕнче çителĕклĕ таран тупса палăртайман. Сăмахран, революциччченхи хăшпĕр авторсем ученăя идеалист тесе кăтартнă. Çапла пĕтĕмлетме вĕсем Бичурин тĕне тÿрремĕн сивлесе çырманнине тата хăй манах пулнине тĕпе хывнă. Анчах Бичурин мĕншĕн манаха тухнă-ха? Çакна тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Илемлĕ литературăра: Никитăна тĕн академийĕ хыççăн хăй юратакан хĕрпе пĕрлешме тÿр килменрен манаха тухма тивнĕ, имĕш. Анчах çак сăлтава чи малтан кăтартса çырнă Н. С. Моллер кун пирки татăклăн ĕнентермест, Бичурин хăй çырса хăварни те çук.

Ученăйпа çывăххăн хутшăнса пурăннă Н. Щукин вара Никита манах тумне служба енĕпе ăнăçлă карьера тума май пуртан тăхăннă тесе палăртать. Наукăра çак шухăш ытларах çирĕпленнĕ.

Мĕншĕн апла пулса тухнине П. В. Денисовăн «Никита Яковлевич Бичурин» кĕнекинче тĕплĕ ăнлантарса панă. Никита малтан священник санне йышăнма килĕшмест. Тĕн ĕçĕнче пысăк вырăн йышăннă хыççăн ĕçлеме ансатрах иккенне ăнлансан, вăл манаха тухма хирĕçсе тăмасть. Ку тĕлĕшрен ăна Хусан епархийĕн пуçлăхĕ Амвросий Подобедов ÿкĕте кĕртме пултарни вăйлă сисĕнет; вăл пултаруллă Никитăна унччченех питĕ хисепленĕ, академирен вĕренсе тухнă йĕкĕте Хусантах хăварать, икĕ çул хушшинчех архимандрит таран ÿсме пулăшать.

Каярахпа, 1831 çулта, Бичурин хăйне манахран кăларма ыйтать. Манах пурнăçĕн йĕрки наукăра тухăçлăн ĕçлеме чăрмантарнине çине тăрса палăртать, апла пулин те, ăна чиркÿ санне пăрахма ирĕк памаççĕ.

Хăйĕн кулленхи пурнăçне пăхсан та, Бичурин чиркÿ йăли-йĕркине чунтан хисеплесе тытса пыман. Пекинра пурăннă тапхăрта та вăл китайла çырнă авалхи кĕнекесене пĕтĕм вăй-халран куçарать, унти пурнăça тĕпчет. Ахальтен мар, 1818 çулта ун пирки пуçлăхсене пĕлтернĕ тăрăх, Бичурин Пекинра тирпейлех пурăнман, имĕш: килĕшÿсĕр тумланса халăх хушшине тухса çÿренĕ, театрсемпе трактирсенче тата ирĕк çуртсенче пулнă, чиркÿ хĕсметне, миссионер тивĕçĕсене çителĕклĕ туса пыман.

Унăн кайранхи кунçулĕнче те çакнах куратпăр. Хăйĕн тăванĕ Н. С. Моллер ун çинчен акă мĕн çырать: «Асатте яланах Невски мăнастирĕнче пурăнатчĕ, вăл манахчĕ, анчах манах тумĕпе эпĕ ăна нихăçан та курман, çÿрессе вăл тĕн çыннин тумĕпе çÿретчĕ. Эпĕ унăн манах тумĕ шкафра çакăнса тăнине çеç курнă… Эпĕ çакна аставатăп: асатте, хăй тĕн çынни пулсан та, нихăçан та типĕ тытмастчĕ. Типĕ тытассине вăл çав тери юратмастчĕ, тип çу шăршине тÿсме пултараймастчĕ. Типĕ вăхăтĕнче пирĕн патăмăра апат тĕлне пырсан, вăл сĕтел хушшинче нимĕн те астивместчĕ. Ăна хăйне апата кĕтнĕ вăхăтра пĕр ун валли аш апачĕ ятарласа пĕçереттĕмĕр».

Бичурин паллă çынсем хушшинче те хăйне ирĕк тыткаланă. Унпа пĕрле вырăссен художникĕ Карл Брюллов килĕнче пулнă çын 1846 çулхи пĕр вăхăта акă епле ÿкерсе кăтартать: «Брюллов хваттерне кĕнĕ чухне эпĕ çакăн пек сцена куртăм: Брюллов çунакан кăмака умне кукленсе ларнă та каштан ăшалать, унăн вĕренекенĕсенчен пĕри сĕтел çине ларнă та гитара калать; Китайра нумай пурăннипе тата çав çĕршыв çинчен çырнисемпе чапа тухнă манах — Иакинф атте вара урăм-сурăм ташша çапать. Пÿлĕмне тĕксĕм çурта çутипе çутатнă. Сĕтел çинче çырткаламалли те пурччĕ — пулштух эрех, чăкăт, кăлпасси».

Тĕне чунтан парăннă çын, чăнах та, хăйне çапла тытма пултарайманах ĕнтĕ. Бичуринăн атеистла кăмăл-туртăмне ученăй хăй вăхăтĕнчи ирĕк шухăшлă çынсемпе — Н. Бестужев, И. Пущин тата ытти декабристсемпе, А. Пушкин И. Крылов, В. Белинский, Н. Некрасов, А. Герцен çыравçăсемпе, çавăн пекех паллă ученăйсемпе, художниксемпе çывăх хутшăнса пурăнни те, прогрессивлă чылай хаçат-журналсемпе çыхăнса ĕçлени те ĕнентерет.

Бичурин тĕнчекурăмне çирĕпленме Рассейри çутлăх юхăмĕ сĕткен панă. Каярах тĕпчевçĕ декабристсен идейисене кăмăллани те яр-уççăн курăнать. Кунта эпир чи малтан ученăй Н. Бестужев декабристпа туслăшнине аса илме пултаратпăр. Обществăлла-политикăлла кĕрешÿре революционер-демократсен туртăмĕсем вăй илсе пынă тапхăрта Бичурин тавракурăмĕ хăйне май улшăнса пырать.

Синолог ăнланулăхĕ Рассейри прогрессивлă ăс-хакăла кăна мар, Хĕвеланăç Европăри шухăшлавçăсен витĕмĕпе те çирĕпленнĕ. Ют чĕлхесене чылай пĕлекенскер, Бичурин авалхи философсене те пĕлнĕ, уйрăмах французсен çутта кăлараканĕсене — Дидро, Руссо, Вольтер ĕçĕсене юратса вуланă.

Никита Яковлевич Хĕвеланăçĕнчи çутлăх идейисене кăмăлланине вăл Вольтерăн «Генриада» поэмине вырăсла куçарни те лайăх çирĕплетет. Асăннă поэма — авторăн халăхсен пысăк массисене çутта кăларасси çинчен калакан шухăшне яр-уççăн кăтартакан тĕслĕх. Унта ăс-хакăла мухтаса çырнă, тĕн вăрçисемпе фанатизма хаяррăн питленĕ.

Хĕвелтухăç Азири халăхсен историне, культурипе литературине тĕпчени Бичурин тавракурăмне çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртет. Ахальтен мар вăл Пекинран таврăннă хыççăн, И. Панаев калашле, «китаецсен пурнăçне мухтама, тÿпене çитиех çĕклеме» тытăнать, европеецсен китаецсенчен хăшпĕр тĕлĕшрен ырра вĕренме кирлине палăртать.

Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен тĕн ыйтăвĕсене Бичурин хăйĕн нумай кĕнекинче пăхса тухать. Акă вĕсен паллăрах ячĕсем: «Монголи çинчен çырса пынисем», «Хальхи ларутăрури Тибета сăнласа пани», «Тибетпа Хухонор историйĕ», «Китай, унта пурăнакансем, вĕсен кăмăл-сипечĕпе йăли-йĕрки, çутĕçĕ», «Китай ăслăлăхçисем тĕн çинчен вĕрентнине сăнласа пани». Хăй вăхăтĕнче пичетленмесĕр юлнă ĕçĕсенче те Бичурин ку ыйтăва сахал мар хускатнă. Вĕсенче синолог Хĕвелтухăçри тĕн системисене стихийăлла материалист куçĕпе тишкерет. Кунта вăл ятарласах тĕрлĕрен халăх ыр-хаяра епле пуççапса пурăннине, шаванизм, буддизм, ламанизм, конфуцианствăпа даосизм тытăмне тĕплĕн тишкерет.

Сăмахран, авалхи китаецсен тĕнĕ аталанса пынине Бичурин наука енчен тĕрĕс çутатса парать, историзм принципне ăнăçлă тытса пырать: «Китаецсем сĕм авал чаплă тусемпе аслă юханшывсене турă вырăнне хурса хисепленĕ», — тет. Каярахпа вĕсен вилнĕ ватăсене (несĕлсене) пуççапас йăли çирĕпленнĕ. Çакнашкал ыйтусене ăнлантарнă чухне автор çутçанталăкра турă хăвачĕ аслă вăй пулса тăрать тесе нимĕн те асăнмасть. Бичурин каланă тăрăх, тĕн халăх çуралса чăмăртаннипе пĕрле çуралать, вăл темĕнле «çÿлти хăват» пулăшнипе мар, халăхра «йăлана кĕнипе» саралать.

Çакнашкал шухăшсенче, чăнах та, материалистла шухăшлав усăмлă сисĕнет. Бичурин хăйĕн тишкерĕвĕсенче христианство картинчен тухмасăр тăман, хĕвелтухăçĕнчи халăхсен тĕн системисене вăл тĕнчери ытти тĕнсемпе танлаштарса кăтартать, вĕсенче чăнчăн ăслăлăх пĕлтерĕшне шырать.

Бичуринпа пĕрле пурăннă тата ĕçленĕ çынсем те, кайранхи тĕпчевçĕсем те унăн атеизмĕ пирки ахальтен мар татăклăн каланă. Валаамри мăнастирте пĕр-пĕрне çывăх пĕлнĕ Н. Малиновский акă мĕн çырнă: «Вăл Христоса Конфуцирен çÿле лартмасть, чун вилĕмсĕрлĕхĕ пирки те иккĕленетчĕ», — тенĕ. Синолог пултарулăхне тарăннăн тĕпченĕ паллă совет ученăйĕ А. И. Бернштам профессор тата акă мĕнле пĕтĕмлетет: «… вăл хăйĕн ĕненĕвĕсене хастаррăн хÿтĕленĕ, тăван наукăна юратнă, урăх çĕршывсен наукине мала хуракансенчен тăрăхласа кулнă, чăннипе вăл атеист пулнă».

Юлашкинчен çапла пĕтĕмлетÿ тума пулать. Н. Я. Бичурин тĕнчекурăмĕ патша Рассейĕнчи феодализма хирĕçле идеологи витĕм кÿнипе йĕркеленсе пынă, çавăн пекех ăна Европăри тата Хĕвелтухăçри шухăшлавçăсен вĕрентĕвĕ çунат панă. XVIII ĕмĕр вĕçĕпе XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче вырăс литературипе публицистики демократилла пыракан кĕрешÿĕн критикăлла шухăш-кăмăлне палăртнă ларутăрура Бичурин хăйĕн ĕçĕсенче çĕршыври пусмăр йĕркисене чылай çивĕччĕн тиркенĕ. Унăн наукири шыравĕсем нумай енлĕ те тарăн пулнă. Ансăртран мар ĕнтĕ вăл авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи Китайпа ытти çĕршывсене Европа умĕнче çĕнĕ тĕнче уçнă пек сулăмлăн сăнласа панă. Хăйĕн пысăк таланчĕпе, мал ĕмĕтлĕ тĕнчекурăмĕпе вăл Рассейри демократилле культурăна пуçарса яракансен шутне кĕрет.

Бичурин атеизмĕ тĕн турă хăвачĕпе пуçланса кайнă тенине сивлет, ăна «философилле вĕрентÿ» тесе шутлать. Вăл цензура хĕснĕрен христианствăна çынсен вăйĕпе йăлана кĕртнĕ тесе çырма пултарайман, анчах çакна Хĕвелтухăçри тĕнсем тĕлĕшĕнчен усăмлăнах палăртма хăюлăх çитернĕ. Турă хăватне мар, ăс-хакăла ĕненни — акă мĕн пулнă ун тавракурăмĕн тĕп палли.

**Г. ТАФАЕВ,**
**И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн аспиранчĕ.**